Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

5 (7859) № ✻ Юн кун, 2011 çулхи кăрлач (январь) уйăхĕн 26-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Хавхалану туслăх çуратать




**Хастар педагог**

***Учитель çулталăкне вĕçлеме январĕн 28-мĕшĕнче районти педагогсем Муркашри вăтам шкула савăнăçлă тĕл пулăва пухăнаççĕ. Вĕсене иртнĕ çулăн пĕтĕмлетĕвĕ çеç мар, малашне мĕн çĕннине алла илмелли те кăсăклантарать паян. Çакăнпа пĕрлех уяв мероприятийĕнче пултаруллă ĕçченсене те чыслĕç.***

***Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Галина Леонидовна Пегасова та районти хастар учительсенчен пĕри. Вăл Вăрманкассинчи пуçламăш шкул-ача сачĕн директорĕнче тăрăшать. Кунта ачасем нумай мар пулин те учительсем хавхалантарнипе вĕсем районти тата республикăри конкурссенче те призлă вырăнсем йышăнаççĕ. Галина Леонидовна каланă тăрăх пĕрлехи ăнăçу учительсемпе ачасен туслă коллективне вĕренӳре те, ытти ĕçре те пулăшать.***

***Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.***

## Больничнăйсем тăрăх укçа тӳлесси улшăнчĕ

Пĕлтĕр çулталăк вĕçĕнче больничнăйсем пирки ыйту сӳтсе явасси ĕçлекен çыншăн актуаллă пулчĕ темелле. Кăçал январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса саккуна кĕртнĕ улшăнусем вăя кĕчĕç. Çапла майпа больничнăйсем тăрăх укçа тӳлессин йĕрки улшăнчĕ. Вăл шутра декрета каякан хĕрарăмсемшĕн те.

Больничнăй тăрăх тӳлемелли вăтам ĕç укçин калăпăшне халĕ малтанхи икĕ çула шута илсе палăртаççĕ. Ку таранччен больничнăй тăрăх укçа шутласа панă чухне çын ĕççĕр ларнă е чирленине пула ĕçлемен вăхăта шута илмен пулсан халĕ пур календарлă куна та шута кĕртеççĕ. Çапла вара больничнăй илес умĕнхи икĕ çул хушши ĕçлекен çын пĕр тăнăç ĕç укçи илсе тăнă пулсан тата больничнăй илмен пулсан çеç ăна больничнăй тăрăх çĕнĕлле укçа тӳлесси пĕчĕк пулмасть.

Больничнăй илекен хĕрарăм малтанхи икĕ çулĕнчи тапхăрта ача çуратассипе тата ăна пăхассипе декретра пулнă пулсан ăна укçа тӳленĕ чухне çак тапхăр вырăнне ĕç укçи илсе тăнă кирек епле тапхăра та шута илме юрать.

Больничнăй тăрăх, çие юлнипе тата ача çуратассипе, ăна пăхассипе тӳлекен пособие шутласа памалли çулталăкри чи пысăк ĕç укçин калăпăшĕ 415 пин тенкĕпе танлашать, е çакă пĕр уйăхра вăтамран 34583 тенкĕ ĕç укçи чухлĕ. Саккунта çирĕплетнĕ тăрăх кăçал çак пособине кивĕ мелпе те шутласа пама юрать, анчах та çитес çултан тытăнса çирĕппĕн çĕнĕлле кăна.

Çакна малаллахи çулсенче декрета кайма хатĕрленекен хĕрарăмсем килĕштерменни паллă. Çавна шута илсех ĕнтĕ Раççей Президенчĕ саккуна хушусем кĕртме сĕннĕ. Халĕ Патшалăх Думинче шăпах çак тĕлĕшпе ĕçлеççĕ те.

Ĕçлекенсене больничнăй тăрăх пособи тӳлесси малтанхи пекех ĕç стажĕпе çыхăнса тăрать. 5 çултан сахалрах ĕçлекенсен пособин чи пысăк калăпăшĕ 20750 тенкĕрен ытла пулма пултараймасть, 5–8 çул ĕçлекенсен – 27666 тенкĕрен ытла мар. 8 е ытларах çул ĕçлекенсен ку кăтарту 34583 тенкĕрен иртмест.

**Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

## Ял тăрăхĕсен депутачĕсем – пысăк вăй

**Çĕнĕлĕхсене – пурнăça**

***Пурнăç аталанăвĕ пĕр вырăнта тăманни тĕрлĕ шайри влаç органĕсене те çĕнĕлĕх хыççăн çĕнĕлĕх шыраттарать. Çак çулпа пырса район администрацийĕ те иртнĕ эрне кун ларусем иртмермелли залĕнче юлашки суйлавра суйланнă ял тăрăхĕсен депутачĕсемпе анлă канашлу ирттерчĕ.***

Кун йĕркинче 10 ытла ыйту пулчĕ. Ял тăрăхĕсен депутачĕсем кашнинех çиччĕ виçсе пăхса тухрĕç. Семинар-канашлăва район пуçлăхĕ – районти депутатсен Пухăвĕн председателĕ И.В. Николаев тата район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ертсе пычĕç. Вĕсем тата район администрацийĕн яваплă специалисчĕсем ял тăрăхĕсен депутачĕсене хумхантаракан ыйтусемпе вĕрентӳллĕ калаçусем ирттерчĕç. Кунпа пĕрлех семинар-канашлура депутатсем хăйсене хумхантаракан нумай ыйту çине тӳрремĕнех хуравсем илме пултарчĕç.

– Депутатсен районти Пухăвĕ 25 депутатран тăрать пулсан, ял тăрăхĕсенчи депутатсен ушкăнĕ паянхи куна 184 çынна пĕрлештерет. Вĕсем ял çыннисене уйрăмах çывăх пулнине пирĕн шута илмесĕр юрамасть. Çакна пĕлсе тăрса эпир кăçалтан ял тăрăхĕсен депутачĕсемпе уйрăм тĕл пулусем ирттерсе Раççейри, республикăри тата районăмăрти çĕнĕлĕхсене кашни çын патне çитерме тĕллев лартатпăр. Ку ĕçре ял тăрăхĕсен депутачĕсем шанчăклă пуласса кĕтетпĕр, – терĕ пухăннисене районăн социаллă-экономика аталанăвĕн ӳсĕмĕсемпе паллаштарнă май райадминистраци пуçлăхĕ Ю. Иванов.

Ун хыççăн республикăра вырăнти самоуправлени епле аталанса вăй илни пирки ял тăрăхĕсен депутачĕсене район администрацийĕн вырăнти самоуправлени органĕсемпе, кадр тата право ыйтăвĕсемпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ Л. Тарасова ăнлантарса пачĕ.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – капиталлă строительство тата пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçи В. Никитин тухса калаçнă хыççăн ял тăрăхĕсен депутачĕсен ялсене тирпейилем кĕртессипе, ялсенче асфальт çулсем тăвассипе, халăха ĕçмелли шывпа тивĕçтерессипе ыйтусем нумай пулчĕç. Депутатсене çĕр пайĕсене регистрацилессипе, вĕсене сутасси-туянассипе çыхăннă ыйтусем те канăçсăрлантарни палăрчĕ.

Районти патшалăх пушар надзор уйрăмĕн ертӳçи И. Смирнов, шалти ĕçсен пайĕн обществăлла милици пуçлăхĕ В. Григорьев, Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссариачĕн пай пуçлăхĕ В. Андреев, район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру секторĕн ертӳçи Н. Милютин тухса калаçни те тĕл пулура шăппăн иртмерĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – культурăпа архив ĕçĕсен пайĕн ертӳçи А. Андреева художествăлла пултарулăх коллективĕсен фестивалĕ пирки калани те депутатсемшĕн ял тăрăхĕсен шайĕнче ĕçлемелли самаййине кăтартрĕ.

Семинар-канашлăва пĕтĕмлетсе район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов кун пек тĕл пулусене татах ирттересси, вĕсен кун йĕркине çĕнетӳсем кĕртсех пырасси пирки каларĕ. Район пуçлăхĕ И. Николаев ку ĕçре депутатсен районти Пухăвĕ енчен пулăшу пуласса пĕлтерчĕ.

**А. БЕЛОВ,**
**Çатракасси ял тăрăхĕн депутачĕ.**

**Çитĕнӳ**

## Пирĕн район хаçачĕ – Пĕтĕм Раççей лауреачĕ

Пирĕн республикăри тăватă издани Пĕтĕм Раççейри «Золотой фонд прессы-2011» смотр лауреачĕсем пулса тăнă. Çав шутра: Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ», Етĕрне районĕнчи «Ĕç ялавĕ», Çĕнĕ Шупашкарти «Грани» тата «Советская Чувашия».

Лауреатсене пахалăх палли, сертификат тата диплом парса Мускавра февраль уйăхĕнче çĕнĕ медиа-сезона уçнă чухне чыслаççĕ.

Пахалăхлă тата обществăлла пĕлтерĕшлĕ хаçатсемпе журналсен çак клубне йĕркеленĕренпе пилĕк çул çитрĕ. «Прессăн ылтăн фондне» кĕртнĕ изданисене библиотекăсене хăйсен фондне комплектлама тата çырăнтару каталогĕсене кĕртме сĕнеççĕ.

«Прессăн ылтăн фондне» тивĕçесси – çĕр-шыври кашни хаçат-журналшăн пысăк чыс, издани общество умĕнчи ответлăха туйнине çирĕплетет, пахалăхлăхпа профессионализм тĕслĕхĕ шутланать.

Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата çырăнса илекенсене пысăк çитĕнӳпе саламлатпăр! Малашне те пĕрле пулар!

**Райхаçат редакцийĕ.**

**Раççейре**

## Бизнес аталанăвĕшĕн

Раççей Федерацийĕн Правительстви çĕр-шыври пĕчĕк тата вăтам бизнес аталанăвĕн çул-йĕрне ӳстерме тĕллев лартнă. РФ Президенчĕ Д. Медведев уйрăм çынсен предпринимательствăри ĕçлĕхне 2020 çул тĕлне ĕçлеме пултаракан çынсем хушшинче 60-70 процента çитерес тĕллевлĕ. Обществăра вара харпăр хăй ĕçне пуçăнас культура йĕркеленсех çитменнине шута илсен, ку тĕллеве пурнăça кĕртессипе комплекслă пысăк ĕçсем туса ирттерме тивет.

Пĕчĕк тата вăтам бизнес ĕç-хĕлĕ тĕлĕшпе пĕтĕмĕшле сăнав ирттерни çĕнĕлĕхсенче тĕрĕс çул-йĕр шыраса тупма пулăшасса шанма пулать. Çакна шута илсе Раççей Федерацийĕн Правительствин йышăнăвĕпе 2011 çулта пĕчĕк тата вăтам предпринимательство субъекчĕсен 2010 çулхи ĕç-хĕлĕ тĕлĕшпе пĕтĕмĕшле статистика сăнавĕ ирттерме пăхнă.

Сăнав бланкĕсене çак адреспа илме пулать: Муркаш сали, Мир урамĕ, 6-мĕш çурт, 105-мĕш кабинет.

**З. ВИНОГРАДОВА, Чăвашстатăн районти уйрăмĕн тĕп специалист-эксперчĕ.**

**ЧР Президенчĕн стипендиачĕсем**

## Çамрăксене шанмалла

***Январĕн 24-мĕшĕнче Чăваш Республикин Президенчĕ Михаил Игнатьев пултарулăхпа палăрса тăракан çамрăксемпе студентсене стипенди парасси çинчен хушу кăларчĕ.***

Кăçал пирĕн районти 15 çамрăк çак хавхаланăва тивĕçрĕ: **Елена Сергеевна АЛЕКСЕЕВА**, Орининти вăтам шкулта вĕренекен; **Юлия Ивановна АНАНЬЕВА**, Муркаш салинчи «Родина» çарпа патриот клубĕн членĕ; **Надежда Владимировна АРСЕНТЬЕВА**, Йӳçкассинчи вăтам шкулта вĕренекен; **Екатерина Анатольевна АФАНАСЬЕВА**, О. Афанасьева уйрăм предпринимателĕн «Ольга» илем салонĕн администраторĕ; **Алина Анатольевна ВОЛКОВА**, Муркашри тĕп больницăн стоматолог врачĕ; **Татьяна Александровна ВОЛКОВА**, Муркашри тĕп библиотекăн уйрăм ертӳçи; **Григорий Иванович ГРИГОРЬЕВ**, Муркашри тĕп больницăн программисчĕ; **Петр Михайлович ЕФРЕМОВ**, А. Вязов уйрăм предпринимателĕн столяр цехĕн маçтăрĕ; **Ольга Владиславовна КИРШЕВА**, Муркашри çамрăк техниксен станцийĕн хушма пĕлӳ паракан педагогĕ; **Елена Михайловна КОЖЕВНИКОВА**, Муркашри тĕп больницăн çамрăксен канашĕн ертӳçи, дерматолог врач; **Елена Святославовна ПАВЛОВА**, «Оринино» хуçалăхăн бухгалтерĕ; **Иван Вениаминович ПЕТРОВ**, Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулта вĕренекен; **Роман Николаевич САПОЖНИКОВ**, Муркаш лицейĕнчи физикăпа математика вĕрентекенĕ; **Александр Юрьевич СТЕПАНОВ**, районти шалти ĕçсен пайĕн милицин участокри уполномоченнăйĕ; **Надежда Сергеевна ЩУКИНА**, район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн методисчĕ.

**Саламлатпăр**



Юратнă мăшăр, ырă кăмăллă анне те кукамай – Анаткас Апаш ялĕнче пурăнакан **Светлана Николаевна КИРИЛЛОВА** паян 50 çул тултарчĕ. Çак ятпа эпир ăна чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх та иксĕлми вăй-хал, тату пурнăç та телей сунатпăр. Çемье ăшшине тытса тăнăшăн, пире пурне те пулăшса пынăшăн, хуйхăра та, савăнăçра та пĕрле пулнăшăн сана тав тăватпăр. Эсĕ пирĕншĕн яланах юратнă та чи хаклă çын. Эпир санпа мăнаçланатпăр.

**Ырă салампа: мăшăрĕ, ывăлĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ тата юратнă мăнукĕ Кира.**

# «Граждансем эпир вĕсене пулăшма тăрăшнине туйччăр»

**Профилактика кунĕнчен**

***Районта профилактика кунĕсем малалла пыраççĕ. Иртнĕ кĕçнерни кун вăл Хорнуй ял тăрăхĕнче иртрĕ. Унта районти шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем, район администрацийĕн, ял тăрăхĕн специалисчĕсем, район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи профилактика Канашĕн, çул çитмен çамрăксемпе вĕсен прависене хӳтĕлессипе ĕçлекен районти комисси членĕсем, районти тĕп больницăри наркологи пӳлĕмĕн, Чăваш Республикинчи Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ĕçченĕсем, Хорнуй ял тăрăхĕн администрацийĕ çумĕнчи профилактика Канашĕн членĕсем, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ А.А. Сидюшкин хутшăнчĕç. Вĕсем 4 ушкăна пайланса ĕçлерĕç.***

**Пĕрремĕш ушкăн** ăнăçсăр çемьесенче пулчĕ. Вĕсем çӳренĕ 8 çемьерен ытларахăшĕнче лару-тăру ырă енне сулăнни палăрнă пулсан, тепĕр икĕ çемье пирки çапла калама çук. Иккĕшĕнче те ача амăшĕсем хăйсен ачисене хăйсемех пăхмаллине ăнланма та тăрăшмаççĕ. Пĕри, хăйĕн кĕçĕн çулхи ачине хăйĕн амăшĕпе хăварса, Чулхула облаçне ирĕк пурнăç шырама тухса вĕçтернĕ. Профилактика кунĕнче хутшăнакансем пырса кĕнĕ чухне кукамăшĕ те мăнукĕ çинчен манса кайни курăнчĕ. Ӳсĕрскерне ача чирлени те хумхантармасть пулас. Ачана районти тĕп больницăри ача-пăча уйрăмĕнчи реабилитаци палатине илсе килме тиврĕ.

Тепĕр çемьери çамрăк хĕрарăм вара 4 тата 7 çулхи ачисене тултан питĕрсе хăварнă. Кĕçĕн ачи хăй çулхисемпе пĕр тан аталанăр тесе ытлашши хыпкаланмасть пулмалла ку хĕрарăм та. «Хавас пурнăç», эрех черкки ачисенчен хаклăрах та, илĕртӳллĕрех-ши? Амăшĕ ăстине ачисем те, тултан çакса хăварнă çăра та пĕлмеççĕ. Кукамăшĕ çине шанса ирĕкре «ярăнса» çӳрекен çамрăк хĕрарăм ăçта çитме шутлать-ши?

– Çак икĕ çемьене вырăнти фельдшерпа акушер пунктĕнчи медицина ĕçченĕсемпе тăтăшах тухса çӳремелле, – палăртрĕ районти тĕп больницăри врач-нарколог, психотерапевт Л.М. Иванова.

**Иккĕмĕш ушкăн** учетра тăракан çынсем патĕнче пулчĕ. Профилактика кунĕ вăхăтĕнче вĕсем право йĕркине пăснă тĕслĕхсем тĕл пулман. Вĕсене профилактика тĕлĕшпе калаçма районти шалти ĕçсен пайне пыма чĕнсе хăварнă.

**Виççĕмĕш ушкăн** ку тăрăхри сунарçăсем (вĕсем 5-ĕн кунта) патĕнче пулчĕç. Вĕсем сунарта усă куракан пăшала мĕнле усранине, ку тĕлĕшпе правилăсене пăхăннипе пăхăнманнине тĕрĕслерĕç. Вĕсем те, травматикăлла хĕç-пăшал усрама ирĕк илнĕ тепĕр çын та ку енĕпе саккуна пăхăнни, йĕркене пăсманни палăрчĕ.

**Тăваттăмĕш ушкăн** вара ял тăрăхĕн территорийĕнче вырнаçнă суту-илӳ предприятийĕсем мĕнле лару-тăрура пулнине, сыхлăх мерисене йышăннипе йышăнманнине тишкерчĕ. Уйрăм çынсен магазинĕсене шута илсен вĕсем кунта пурĕ 6. Йĕркене пăснă тĕслĕхсем кунта та пулмарĕç.

– Çамрăксем эрех-сăра нумай туянаççĕ-и? –кăсăкланатăп эпĕ.

–Пирĕн магазинта эрех каймасть, – тет Тойкилтĕ ялĕнчи магазин сутуçи. – Пирĕн ялти çамрăксем, чăннипех те, «воспитаннăй». Вĕсем хальччен эрех ĕçсе çапкаланса çӳренине курман.

Профилактика кунне пĕтĕмлетме Хорнуйĕнчи клуба район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертӳçи А.Е. Андреева, районти шалти ĕçсен пайĕн ертӳçи Е.И. Плечов хутшăнчĕç.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ М.В. Колесникова каланă тăрăх профилактика ыйтăвне нихăçан та кун йĕркинчен кăларман. Иртнĕ çул акă ял тăрăхĕн администрацийĕ çумĕнчи профилактика Канашĕн 6 ларăвне, çемьесемпе ĕçлекен комиссин 7 ларăвне ирттернĕ. 2009 çулта ку тăрăхра 15 преступлени тунă пулсан, иртнĕ çул вăл 13 юлнă. Апла пулсан район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ А.Е. Андреева каланă пек ял тăрăхĕнчи профилактика ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комиссин, ял тăрăхĕн активĕн ку кăтартăва татах та пĕчĕклетме татах та тăрăшмалла. Ку ĕçре Культура çуртĕсен директорĕсемпе клуб заведующийĕсен пĕлтерĕшĕ те пысăк пулмалла.

– Культура учреждение килекен кашни çул çитмен çамрăкшăн яваплăха туймалла вĕсен. Çавăнпа та клубран тухса кайсан вĕсен ашшĕ-амăшĕпе телефонпа çыхăнни пĕрре те ытлашши пулас çук, – терĕ Алевтина Евстафьевна.

Çул çитмен çамрăксен каçхи 10 сехетчен кая юлмасăр килте пулмалла. Çакăн çинчен Чăваш Республикин ачасене сывлăх тĕлĕшĕнчи, интеллект, психика, ăс-тăн тата нравственноç тĕлĕшĕнчен аталанасси çине япăх витĕм кӳрекен факторсенчен хӳтĕлемелли хăш-пĕр мерăсем çинчен калакан 43-мĕш номерлĕ Саккунра каланă. Июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа августăн 31-мĕшĕччен 23 сехетрен пуçласа ирхи 6 сехетчен, ытти вăхăтсенче 22 сехетрен пуçласа ирхи 6 сехетчен çул çитмен çамрăксен ашшĕ-амăшĕсĕр обществăлла вырăнта, çав шутра урамра, паркsемпе скверсенче, кану вырăнĕсенче, обществăлла апатлану предприятийĕсемпе магазинсенче тата эрех-сăра сутакан магазинсемпе барсенче çӳреме юрамасть. Çакăн çинчен культура ĕçченĕсен çеç мар, чи малтан ашшĕ-амăшĕсен манса каймалла мар. Çак саккуна пăхăнманнисене – çӳлерех асăннă предприятисен ертӳçисене те, ашшĕ-амăшне те явап тыттараççĕ.

Районти шалти ĕçсен пайĕн ертӳçи Е.И. Плечов вырăнта çул çитмен çамрăксене кусăран вĕçертмелле маррине палăртрĕ:

– Пирĕншĕн «ют ачасем» пулмалла мар, – терĕ вăл. Профилактика кунне пĕтĕмлетнĕ май Евгений Иванович çакна та палăртрĕ:

– Граждансем эпир вĕсен проблемисене ăнланнине, саккуна пăсмасăр вĕсене пулăшма тăрăшнине туйса тăччăр. Пирĕнте вĕсем хăйсене пулăшаканĕсене курччăр. Преступленисене сирсе ярас тĕлĕшпе эпир халăх патне çывăхарах пытăмăр, вĕсем пире ытларах шанма пуçларĕç пулсан эпир хамăр умри тĕллевсене пурнăçлатпăрах.

Çитес кĕçнерни кун вара профилактика кунĕ Çатракасси ял тăрăхĕнче пулать.

**Л. ТУКТИНА.**

# Сирĕн участковăй. Паллашăр

***Шалти ĕçсен пайĕнче тăрăшакан сотрудниксен халăхпа тачă çыхăнура ĕçлесе пымалли паллă. Уйрăмах – милицин участокри уполномоченнăйĕсен.***

***Паянхи кун вĕсен ĕç-хĕлне Илья Иванович Петров ертсе пырать.***



1. **Григорий Геннадьевич Терентьев** аслă лейтенант. Уйкас Янасал тата Чуманкасси ял тăрăхĕсенче ĕçлет. Васкассинчи милицин участокри пункчĕн телефон номерĕ: 61-5-46, Отарккăри номер – 61-2-36.



2. **Виктор Валерьевич Алексеев** милици капитанĕ. Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ. Тел.: 69-4-87.



3. **Михаил Вячеславович Мерлов** аслă лейтенант. Ильинка ял тăрăхĕ. Тренккăри милицин участокри пункчĕн телефон номерĕ: 66-7-31.



4. **Емельян Алексеевич Пугачев** милици майорĕ. Катькас ял тăрăхĕ. Кораккассинчи милицин участокри пункчĕн телефон номерĕ: 65-6-07.



5. **Олег Николаевич Яковлев** аслă лейтенант. Муркаш тата Хорнуй ял тăрăхĕсем. Тел.: 63-9-47, 64-5-44.



6. **Александр Витальевич Николаев** милици капитанĕ. Москакасси ял тăрăхĕ. Тел.: 66-2-85.



7. **Александр Владимирович Прокопьев** аслă лейтенант. Оринин ял тăрăхĕ. Патаккассинчи милицин участок пункчĕн телефон номерĕ: 60-2-36.



8. **Виктор Владимирович Бирюков** кĕçĕн лейтенант. Çатракасси ял тăрăхĕ. Тел.: 68-2-58.



9. **Александр Юрьевич Степанов** аслă лейтенант. Турай ял тăрăхĕ. Тел.: 64-2-24.



10. **Денис Игоревич Семенов** лейтенант. Шетмĕпуç тата Йӳçкасси ял тăрăхĕсем. Тел.: Шетмĕпуç – 68-5-36, Йӳçкасси – 60-5-72, 60-7-51.



11. **Николай Евгеньевич Кудряшов** лейтенант. Юнкă тата Ярославка ял тăрăхĕсем. Тел.: Юнкă – 69-7-33, 69-8-07, Ярославка – 43-2-49.



12. **Александр Михайлович Степанов** лейтенант. Ярапайкасси ял тăрăхĕ. Тел.: 67-2-33, 67-2-46.

**Ленинград хулине фашистсен блокадинчен хăтарнăранпа 67 çул çитнĕ май**

# Актайри паттăр «Харитоша»

***Ыран, январĕн 27-мĕшĕнче, 1941-1945 çулсенчи Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче Ленинград хулине фашистсен блокадинчен хăтарнăранпа 67 çул çитет. 900 куна пынă фашистсен хĕн-асапĕнчен хулана 1944 çулхи январĕн 27-мĕшĕнче пĕтĕмпех ирĕке кăларнă.***

***Паян пирĕн районта Ленинграда хӳтĕленĕ 3 салтак пурăнать: Николай Александрович Александров (Актай ялĕ), Василий Николаевич Балашов (Хунтăкасси), Иван Харитонович Харитонов (Çаранçырми). Ун чухнехи хаяр çапăçусене аса илме вĕсене паян та çăмăл мар. Блокадăри Ленинградра пурăннă Пелагея Васильевна Анатольевăпа (Москакасси) Александр Зиновьевич Бурдейкин ( Ильинка) çав вăхăтри чĕр нушана паян та манаймаççĕ.***

1941 çулта çуркунне салтак ячĕ тухсан Актайра пурăнакан Н.А. Александров хăйне малта 2 çуллăх салтак службин вырăнне хаяр вăрçă çулĕсем кĕтни çинчен тĕлĕкре те тĕллеммен. Салтак пурнăçĕ унăн Украинăран пуçланнă: чикĕ хĕрринчен 7 çухрăмра иртнĕ малтанхи вĕренӳсене халĕ те астăвать вăл.

– Июнĕн 22-мĕшĕнче митинг ирттерчĕç. Вăрçă пуçланнине пĕлтерчĕç. Кив Матькăри Егор Григорьев куççульпе макăрнине паян та астăвать вăл. 1939 çулта çара илнĕскерсен киле таврăнмалли анчах юлнăччĕ çав. Пулмарĕ вĕсен киле таврăнасси. Николай Александровичăн шăпи вара ентешĕн шăпинчен телейлĕрех пулчĕ. Вăрçă вучĕ витĕр тухса яла Çĕнтерӳпе таврăнма шăпи пурнăç çулне уçса пычĕ пулĕ.

Вăрçă пуçланнă кунах вĕсене тĕрлĕрен объектсене хураллама уйăрчĕç. Н.А. Александрова çăкăр заводне çирĕплетрĕç. Анчах нумайлăха мар. Вăрçăн малтанхи кунĕсенче çăмăл килмерĕ çав совет салтакĕсене. Каялла чакнă вăхăтсем те пулчĕç. Мĕнле килсе тухатчĕ пулĕ пирĕн ентешĕн шăпи, çав вăхăтра аманнă салтак тытса пыракан автомашина çине ларса ĕлкĕрмен пулсан. Калама хĕн.

– Хамăрăннисемпе Днепр урлă каçсан Браворине илсе кайрĕç. Чугун çул пăхса тăраттăмăр. Бронепоездсене ирттерсе ямаллаччĕ, нимĕçсене сирпĕтмеллечĕ, – аса илет ветеран паян.

Пĕррехинче çапла Шепекейкино ялне кирлĕ документсен пакетне леçме яраççĕ Александров связнойа. Анчах каялла таврăнас çула нимĕç самолечĕ бомба пăрахса татса каять. Анчах аманса госпитальтен выртса тухнă Муркаш районĕн каччине хальхинче тăшман пульли хĕрхенчĕ пулĕ. Вăрман урлă Волоконовка патне тухнă вăл ытти салтаксемпе пĕрле. Мирошниченко командир ăна вилнĕ тесе те шутланă иккен.

Ленинград патне лекнĕ вăхăта шурă çӳçлĕ салтак çапла аса илет:

– Пире темле шыв урлă илсе кайрĕç. Ку Ладога кӳлли пулнă иккен. Нимĕçсем пĕр чарăнми бомба пăрахаççĕ. Пулăçсен поселокне (çавăн пек ял пурччĕ) илсе кайрĕç, – ассăн сывлать Николай Александрович. – Кунта эпĕ «Большевик» заводра снарядсем тунă çĕрте службăра тăракан йыснана Андрей Белова куртăм. 1942 çул пуçламăшĕччĕ ун чух.

– Кам малти линие каясшăн? – ыйтать тепĕр кунне командир.

Пурте пĕр хускалми тăраççĕ.

– Апла пулсан, Александров, пĕр утăм малалла тух. Ырантан пуçласа эсĕ полк командирĕ хушнипе малти линие каятăн, – терĕ стройран тухнă салтака. – Корреспонденцисем леçмелле пулать сан.

Салтаксем патне кил ăшшине илсе çитерет. Мĕн тери хаклă иккен вăл вут-çулăма вилĕм ытамĕнче çӳрекен салтакшăн аннеатте хăй аллипе çырнă çыру, çав конвертпа килнĕ таван ял сывлăшĕ. Салтаксем ăна «Харитоша килчĕ!» – тесе кĕтсе илетчĕç. Хăй тивĕçне чун-чĕре хушнă пек пурнăçлакан почтальон тенине пĕлтерет иккен ку. Фашистсен тăхлан çумăрĕнчен хăтăлса хамăрăннисене ырă хыпар илсе çитернĕ Александров экспедиторшăн çыру илнĕ салтак савăнăçĕнчен хакли мĕн пултăр тата. Унăн ячĕпе салтаксем юрă та çырнăччĕ.

Астăвать-ха Николай Александрович пĕр украинец килтен хыпар илнĕ хыççăн мĕн тери савăннине. Ун чухне Александров салтак шыв варринчех вилсе выртатăп пуль тесе шутланăччĕ. Вăл çырусем илсе каçакан лодкăна тăшмансем хытах «ăшаларĕç» çав. Тав Турра, лодка тĕпĕнче пĕр хускалми выртакан салтака шыв хумĕпе лодка хăех çыран хĕррине илсе çитерчĕ.

– Тепĕр совет салтакне леш тĕнчене ăсатрăмăр, – тесе савăнчĕç пуль-ха ун чух фрицсем, – аса илсе кулать паттăр салтак.

Çыран хĕрринче хамăр салтаксем ăна тӳрех урра! çĕклерĕç.

Украинецăн ялĕ нимĕçсен аллинче пулнă хыççăн пирĕннисем ирĕке кăларнă пулнă. Ашшĕ-амăшĕ те сывă иккен. Çакăн пек хаклă хыпаршăн вăл Александрова ыталасах чуптурĕ.

– Аслă Отечественнăй вăрçăн орденĕпе наградăлама тăрататăп сана, – терĕ ун чух командир Александрова. Шел, çакăн хыççăн темиçе кунтанах пуçне хучĕ вăл.

– Пурăнатăп тесе шутламан хам та, – калаçăва малалла тăсать вăрçă паттăрĕ.

– 3 уйăх çапла çырусем леçсе çӳренĕ хыççăн пирĕн чаçе канăва кăларчĕç. Çавăн чухне пире те çын пуçне 125-шер грамм çăкăр пама пуçларĕç. Малтан 400-500-шер грамм тиветчĕ, – ассăн сывлать ветеран. - Выçăпа аптранипе утса пынă чухнех сулкаланаттăмăр, ӳкекеннисем те сахал мар пулнă. Вăйлăраххисен çĕклесе тăрататчĕç. «Гражданскисем» те нумай пĕтнĕ выçăпа. Картлашка çинче çын ларать. Канма ларнă пуль тесе шутлатăн та – вăл хытсах кайнă иккен.

1943 çулта пирĕн ентеш службăра пулнă полка артиллеристсен 48-мĕш полкĕпе пĕрлештереççĕ. Актай каччи артиллерист пулса çапăçать. Ленинграда ирĕке кăларнă хыççăн тата мĕн чуль ялпа хулана ирĕке кăларман пулĕ? Аслă Çĕнтерĕве вăл Прагăра кĕтсе илет.

Çĕр-шывăмăр ентешĕн паттăрлăхне тивĕçлипех хакларĕ. Ветеран «Ленинграда хӳтĕленĕшĕн», «Çапăçури паттăрлăхшăн», «Хăюлăхпа паттăрлăхшăн» тата ытти медальсене, Отечественнăй вăрçăн 2 степень орденне тивĕçрĕ.

1946 çулта таврăнчĕ тăван яла Н.А. Александров. Вăрçа пула юхăннă халăх хуçалăхне ура çине тăратассишĕн тимлерĕ. Мăшăрĕпе Татьяна Клементьевнăпа 5 ача çуратса ӳстерчĕ. Шел, халĕ мăшăрĕ те, виçĕ ачи те пурнăçран уйрăлнă ĕнтĕ. Иртнĕ çул вара Николай Александрович вăрçăри паттăрлăхшăн панă тепĕр наградăна тивĕçрĕ – район администрацийĕ вăрçă ветеранне Муркашра пĕр пӳлĕмлĕ хваттер парчĕ. Вăрçăра икĕ хутчен аманнă, вилĕмпе юнашар çӳресе ун çави айне лекмен ветерана пурнăçĕ вăрăм те теплĕ пултăр. Ачисемпе мăнукĕсем унăн пурнăçне çутатса тăччăр кăна. Çакăнтан хакли мĕн пултăр 90 çула кайнă ветераншăн.

**Л. ПАВЛОВА.**

# Хирти çĕрĕн хуçи пулмаллах

## Кун йĕркинче тăракан çивĕч ыйту тавра

*2010 çулхи раштав уйăхĕн 29-мĕшĕнче РФ Президенчĕ Д. Медведев «Раççей Федерацийĕн уйрăм саккун акчĕсен ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртессипе çыхăннă хăш-пĕр пайĕсене улшăнусем кĕртесси çинчен» саккуна алă пусрĕ. Çĕнĕлĕх кăçалхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен вăя кĕчĕ. Çĕр хутшăнăвĕсене тӳрреммĕнех пырса тивекен çĕнĕлĕхсем пирки район администрацийĕн пуçлăхĕн çумне – ял хуçалăх пайĕн ертӳçине В.А. КАЛИНИНА каласа пама ыйтрăмăр.*

**– Владимир Аркадьевич, уйхирте çум кашланине курса чунне ыраттарнă хресченшĕн асăннă саккун хăйне евĕр шанчăк çуратрĕ тесен те йăнăш пулмасть пулĕ. Эсир мĕнле шутлатăр?**

– Саккун çĕр çине влаç енчен тĕпленĕрех çаврăнса пăхма тата май çитнĕ чухлĕ пулăшу пама çул уçать. Саккун мĕн пур çĕрĕн уйрăм харпăрлăх правине патшалăх регистрацийĕ витĕр кăларма, çавăн пекех республикăри 400 пин гектар ытла йышăнакан çĕр лаптăкне влаç пулăшăвĕпе уйрăм харпăрлăха илме майсем туса парать. Ан тив, çĕрсен хуçисем ял хуçалăх производствине хăвăртрах инвестици хывччăр, ăна аталантарма нумай вăхăтлăха паракан кредитсем илччĕр, халиччен усă курман çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртчĕр, çĕр хутшăнăвĕсене çĕнĕ вăйпа йĕркелеччĕр. Шанатăп, саккун ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсен тухăçлăхне ӳстерме пулăшĕ.

**– Саккуна пăхса тухсан улшăнусем икĕ тапхăртан тăни куç умне пулать. Пĕрремĕшĕ иртнĕ çулхи раштав уйăхĕнчен пуçланнă, иккĕмĕшне кăçалхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пурнăçлама пуçласшăн.**

– Çапла. Çĕре пая уйăрса кăларса уйрăм харпăрлăха илмелли тата харпăрлăх правине регистрацилемелли тӳлев улшăнчĕ. Малашне АПК организацийĕ те, хресчен (фермер) хуçалăхĕ те, ытти харпăрлăхлă тытăм та РФ субъекчĕн саккунĕпе çирĕплетнĕ хакпа пайсем туянма, сухалакан-акакан çĕрĕн харпăрлăх правине нумай вăхăтлăха (яланлăха) регистрацилеттерме пултарать. Çĕрĕн кадастр тӳлевĕн 15 процентĕнчен хаклăрах пулмалла мар.

Кăçалччен çĕр пайĕн уйрăм харпăрлăх правине пĕр уйри тепĕр пай хуçине е пачах урăх çĕрти çынна çĕре уйăрса парас тĕллевпе кадастр ĕçне саккунпа килĕшӳллĕн пурнăçлаттарсан кăна сутма е парнелеме пултарнă. Малашне вара лаптăка çĕр виçекене кастарса-виçтерсе тăкакланмасăрах тата тӳлевсĕрех предприяти-организацие е пĕр-пĕр çынна парнелеме ирĕк пур. Ăна валли РФ Картографи, кадастр тата патшалăх регистрацийĕн республикăри управленине заявлени тăратмалла. Унччен хи çĕр хуçине уйрăм харпăрлăх прависĕр юлнине регистрациленĕ кунран вăл пай хуçи пулма пăрахать. Çакăнпа пĕрлех çĕр муниципалитета куçать. Харпăрлăх правине вĕсем хăйсен аллине илеççĕ.

**– Республикăри пекех районта та пушă выртакан ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсем чылай. Вĕсемпе усă курманшăн явап тыттарма пăхнă-и?**

– Тĕрĕс ыйту. Темиçе çул сухаламасăр-акмасăр, тыр-пул çитĕнтермесĕр выртнă çĕрсем вĕсен хуçисем РФ саккунне пăснине пĕлтереççĕ. Çавăнпа та куншăн яваплăха та палăрмаллах ӳстернĕ. Кăрлачăн 1-мĕшĕнчен кунашкал çĕр пайĕн хуçине 2 – 5 пин, должноçри çынна 4 – 6 пин, предприяти-организацие 80 – 100 пин тенкĕ штраф тӳлеттереççĕ. Вăл е ку анана 3 çул е ытларах пушă вырттарсан, экологие тата çĕр ĕçĕн йĕркине пăхăнмасан ăна хуçаран, предприяти-организацирен туртса илме те пултараççĕ.

**– Районта çĕр пайĕсем тĕлĕшпе тата вĕсене патшалăх регистрацине тăратассипе ларутăру еплерех-ха?**

– Маларах çулсенче тунă списокпа çĕр пайĕсен хуçисем район территорийĕнче 15118 çын. Паянхи куна вĕсенчен 28 процентĕ кăна хăйсен пайĕсене патшалăх регистрацийĕ витĕр кăларнă. Ыттисемпе ĕçлесси – умри тĕллев. Çак ĕçе вырăнсенчи ял тăрăхĕсем те активлă хутшăнасса шанас килет. Танлаштарма, çĕр пайĕсене патшалăх регистрацине республикăра 24 процента яхăн тăратнă.

**– Çĕнĕлĕхсем вăя кĕнĕ май муниципалитетсен мĕнле ыйтусене татса памалла пулать?**

– Çĕре харпăрлăха илекенсен правине регистрацилессипе çыхăннă ыйтусене татса пама вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен те пĕр çын пек хутшăнмалла. Пай хуçисен 2012 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕччен лаптăксене виçмелли проектсем тутармалла. Харпăрлăхçăсем хатĕрлеттермесен муниципалитетсен ку ĕçе 2013 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕччен пурнăçламалла. Малтанлăха шутланă тăрăх вырăнти хăй тытăмлăхăн хăйĕн аллине республикипе 124 пин гектар илме, каярахпа çĕрсен кадастр тӳлевĕн 15 процентĕпе танлашакан хакпа сутсан вырăнти бюджет валли пурĕ 400 миллион тенкĕ ытла тупăш тума май пур. Куратпăр, ку çул вырăнти бюджета пуянлатмалли тепĕр çăл куç. Çакă çĕр пайĕсене шута илме тата йĕркене кĕртме хавхалантарĕ. Çапах та ял тăрăхĕсенче ăнланса пĕтереймен ыйтусем сахал мар. Çĕнĕлĕхсене ял çыннисем патне çитерессипе халăхпа тĕл пулусем ирттересси – пирĕн умра тăракан ĕç-хĕл. Кунпа пĕрлех ял тăрăхĕсен специалисчĕсене пулăшас тĕллевпе вĕсем валли семинар-канашлусем ирттерессине те ĕç планне кĕртетпĕр.

Хирти çĕрĕн хуçи пулсан çеç вăл тухăçлăрах ĕçлесси пирки пирĕн иккĕленӳ çук. Ял çыннисем те çакна ăнланасса шанатпăр. Саккун вĕсем енче.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

## Объявления

**Постановление главы администрации Тораевского сельского поселения № 4 от 24 января 2011 года**

**О проведении публичных слушаний по проекту решения муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»**

В соответствии со ст. 28 Закона Российской Федерации от 06.10.2003 г. №131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», ст. 14 Устава Тораевского сельского поселения Моргаушского района ЧР **ПОСТАНОВЛЯЮ:**

1. Провести публичные слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» 2 февраля 2011 года в 10 часов 00 минут в здании администрации Тораевского сельского поселения по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Тораево, улица Базарная, дом 5.

2. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию в районной газете «Знамя победы».

**Глава администрации Тораевского сельского поселения Н.А. ПАВЛОВ.**

**Проект муниципального правового акта**

**Об изменении разрешенного использования земельного участка**

Руководствуясь п.10 ст.3 Федерального закона от 25 октября 2001 года №137-ФЗ «О введении в действие Земельного кодекса Российской Федерации», с учетом результатов публичных слушаний постановляю:

Изменить разрешенное использование земельных участков земельного участка с кадастровым номерам 21:17:190403:119, из категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, д. Анаткасы, ул. Октябрьская, д. 36, общей площадью 42 кв. м. с «для строительства магазина» на «для содержания здания магазина».

С предложениями по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» обращаться в администрацию Тораевского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 8-00 до 17-00 часов, кроме выходных дней. Последний день приема предложений 02.02.2011 года до 9-00 часов.

***

**В объявлении собственника земельной доли, о выделении земельного участка в счет земельной доли, о проведении собрания по согласованию местоположения границ, опубликованного в районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 15 января 2011 года в № 2 (7856) страница 4, в 1 колонке, в 36 абзаце допущена опечатка, вместо «ул. Торинино, д. 52» следует читать «ул. Торинино, д. 22».**

## Пирĕн пата çыраççĕ

# Тăрăшулăхпа палăрать



Кулленхи пурнăçра хамăр йĕри-тавра ырă çынсем ытларах пулсан пурăнма та аван. Вĕсемпе курса калаçсан чун çĕкленет, çĕнĕ тĕллевсем çуралаççĕ, ĕçлес кăмăл ӳсет. Çакăн пек ырă çынсенчен пĕри вăл – Роза Васильевна Кирпичникова. Ăшă кăмăллă хĕрарăм Оринин ял тăрăхĕнчи Вăрманкасси ялĕнче çуралса ӳснĕ. Вун-вун хĕр ача пекех ачаллах çĕр ĕçне хăнăхнă, тантăшĕсемпе пĕрле Орининти вăтам шкула çӳренĕ. Алла аттестат илсен вара Роза Шупашкарти кооераци техникумĕнче пĕлӳ ӳстерме тĕллев лартать. Ачаллах йывăрлăхсене çĕнме хăнăхнă хĕр техникумран та ăнăçлă вĕренсе тухать. Çав çулах Мăн Сĕнтĕрти райпора товароведра ĕçлеме пуçлать.

Мĕн чуль Атăл шывĕ юхмарĕ-ши унтанпа! Çак хушăра ĕçченлĕхпе кăна палăрнă товароведа универмагри ĕçсене ертсе пыма та шанаççĕ. Унта тивĕçе шанăçа кăларнă сутуçă юлашки нумай çул Тренккăри куллен кирлĕ таварсен магазинне ертсе пырать.

Роза Васильевна 35 çул ĕнтĕ суту-илӳ отраслĕнче. Çак тапхăрта вăл ăста сутуçă, пултаруллă ертӳçĕ, ырă чунлă та сăпайлă хĕрарăм пулнипе палăрчĕ. Çавăнпах ял çыннисенчен тав сăмахĕ кăна илтме пулать ун пирки. Хăйĕн ĕçченлĕхне кура вăл ертсе пыракан коллектив та тăрăшулăхĕпе палăрать.

2010 çул Тренккă магазинĕшĕн тата кунта тавар туянма çӳрекенсемшĕн пысăк çĕнĕлĕхпе асра юлĕ. Мăн Сĕнтĕр райповĕн ертӳçисем пулăшнипе тата Роза Васильевна тăрăшнипе Тренккăри куллен кирлĕ таварсен магазинĕнче, тĕплĕ юсав ĕçĕсем ирттернĕ хыççăн, «Союз» суту-илӳ центрĕ ĕçлеме пуçларĕ.

Эпир, ял çыннисем, Роза Васильевнăпа мухтанатпăр. Унăн ĕçĕ малашне те ăнса пырасса шанса тăратпăр. Вăл «Чăваш Республикинчи потребительсен кооперацийĕн ветеранĕ» ят илнишĕн, «Потребительсен кооперацийĕн отличникĕ» паллăна, Мăн Сĕнтĕр райповĕн тата Чăвашпотребсоюз правленийĕн Хисеп грамотисене тивĕçнишĕн савăнатпăр.

**Ильинка ял тăрăхĕн ĕçченĕсем.**

## Интервью

# Новое в обязательном медицинском страховании

ОАО Чувашская МСК

***30 ноября Президент России Дмитрий Медведев подписал Федеральный закон № 326 “Об обязательном медицинском страховании в Российской Федерации”, который внес изменения в функционирование системы ОМС.***

***О том, какая подготовка проведена открытым акционерным обществом “Чувашская медицинская страховая компания” для работы в новых условиях и какие изменения произойдут в связи с принятием закона, разговор с генеральным директором ОАО “Чувашская МСК” Татьяной Михайловной ВИШТЫНЕЦКОЙ.***

– О том, что с 2011 года в работе системы обязательного медицинского страхования произойдут изменения, мы знали еще в июле 2010 года, после принятия закона в первом чтении, и стали готовиться к грядущим переменам.

ОАО “Чувашская МСК”, ровесник системы ОМС, работает на рынке страховых услуг с 1 октября 1992 года, является одним из лидеров республиканского страхового рынка и специализируется на обязательном и добровольном медицинском страховании. В районах и городах республики работают 19 представительств, в которых наши работники помогают каждому застрахованному реализовать свое право на выбор медицинского учреждения, врача, определить услуги по потребности.

Численность застрахованных в ОАО “Чувашская МСК” граждан на 31 декабря 2010 года составила 240560 человек. В прошлом году застрахованные нами граждане обратились в 64 лечебно-профилактических учреждения ЧР, 3199 человек получили медицинскую помощь за пределами республики.

Общая сумма, оплаченная за оказанную медицинскую помощь жителям республики, составила 776,9 млн. руб.

В 2010 году страховая компания из резерва предупредительных мероприятий выделила медицинским учреждениям республики дополнительно более 9,5 млн.руб. на приобретение медицинского оборудования, повышение квалификации медработников, лекарственное обеспечение кормящих матерей, а также на пропаганду санитарных знаний населению.

**– Какие новшества вводятся принятым документом?**

– Закон “Об обязательном медицинском страховании в Российской Федерации” вступил в силу с 1 января 2011 года. Документ содержит в себе ряд новаций, но не предполагает коренных изменений в ОМС. Он улучшает организацию системы, четко регламентирует действия всех ее участников – федерального и территориальных фондов ОМС, страховых медицинских организаций, лечебных учреждений, расширяет права граждан, создавая условия для своевременного и качественного предоставления медицинской помощи каждому человеку и прописывает его обязанности.

Одна из новаций – это введение страховых медицинских полисов нового, единого, образца. По действующему закону срок действия полиса ограничен сроком действия договора страхования, и в большинстве случаев его необходимо продлевать. Полис единого образца не требует замены, переоформления и позволяет использовать его в течение всей жизни, в том числе при смене места жительства. А самое главное — он гарантирует оказание бесплатной медицинской помощи на всей территории Российской Федерации.

В одночасье все изменить не возможно, поэтому нет необходимости в срочной замене полисов, имеющихся на руках у граждан. Они будут действовать и впредь. Менять их на новые начнут не ранее 1 мая 2011 года, а завершат обмен к 2014 году.

На сегодняшний день и по старому, и по новому полису медицинскую помощь можно получить во всех медучреждениях страны, работающих в системе ОМС. Но прикрепление к районной поликлинике все-таки остается.

Ранее лечение иногородних осложнялось из-за задержек взаиморасчетов между территориями, где застрахован больной и где ему неожиданно понадобился врач. Новый закон предполагает четкие правила и сроки взаиморасчетов – в течение 25 дней.

Прежде право выбора страховой медицинской организации предоставлялось работодателю и органу исполнительной власти субъекта Российской Федерации. Согласно новому закону гражданин получил возможность самостоятельного выбора страховой медицинской организации, которой доверит защиту своих прав, медицинской организации и врача.

В ФЗ № 326 говорится, что в течение трех лет после 1 января 2011 года каждый из нас должен выбрать страховую компанию, причем медицинские услуги и их количество во всех компаниях едины. Все страховые компании будут иметь договоры со всеми клиниками системы ОМС.

В связи с вступлением в силу закона “Об обязательныом медицинском страховании в Российской Федерации” с 1 января 2011 года были внесены изменения в пункт 9 части 1 статьи 18 Федерального закона от 26 июля 2006 года № 135-ФЗ “О защите конкуренции”, согласно которым федеральным органам исполнительной власти, органам исполнительной власти субъектов Российской Федерации, внебюджетным фондам, субъектам естественных монополий нет необходимости проводить открытые конкурсы и аукционы для отбора страховых медицинских организаций, осуществляющих обязательное медицинское страхование.

Стоит отметить, что недействующий полис ОМС не является поводом для отказа от медпомощи. Если все-таки такое произошло, то нужно незамедлительно позвонить по телефону: 6-30-43 и сообщить о проблеме.

**– Новый закон влечет за собой изменение в контроле качества оказанных медицинских услуг?**

– Он делает основной упор на защиту прав пациентов и детально прописывает обязанность страховых медицинских организаций по контролю оказания медицинской помощи гражданам. К примеру, если человеку с полисом предлагают платные услуги, то он должен, прежде всего, проконсультироваться в своей страховой медицинской организации, которая обязана разъяснить права и обязанности гражданина. К сожалению, не все граждане пользуются этой услугой.

На протяжении 18 лет правовая поддержка застрахованных является отличительной чертой Чувашской медицинской страховой компании. В ее структуре создан и работает отдел медицинской экспертизы и защиты прав застрахованных. Так, за некачественную медицинскую помощь в 2010 году с ЛПУ удержаны 159,1 тыс.руб., наложены финансовые санкции на 1,8 млн.руб.

Ежедневно юристы и врачи-эксперты ведут прием граждан по вопросам, касающимся оказания медицинской помощи, выбора врача и медицинского учреждения, госпитализации, при необходимости защищают их в досудебном порядке и в судах.

**– Куда можно обратиться, если человек не удовлетворен медпомощью?**

– В случае, если в лечебно-профилактических учреждениях Чувашской Республики отказали в приеме, предоставили несвоевременно помощь или услуги ненадлежащего объема и качества, можно обратиться за консультацией лично к представителям ОАО “Чувашская МСК”, которые находятся по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, 6, либо в головной офис по адресу: г. Новочебоксарск ул. Комсомольская, 21 или по телефону 73-04-42.

Адреса представительств, где можно получить полис обязательного медицинского страхования в районах Чувашской Республики, находятся на сайте ОАО “Чувашская МСК” www.novsbk.cap.ru.

# Çамрăксен киревсĕр ĕçĕ

Преступлени хыççăн

***Çĕнĕ çулăн иккĕмĕш кунĕнчех, тĕрĕсрех каласан çĕрле, Исетеркке ялĕн çамрăкĕсем хăйсен ялне «чапа» кăларма пултарчĕç. Çакăн пирки тӳрех районта кăна мар, республикăра та тĕрлĕ калаçу пулчĕ. Ку таранччен нумайăшĕ Чуманкасси ял тăрăхĕнчи пысăк яла тĕнчипе паллă Валентина Егорова спортсменка çуралса ӳснипе пĕлнĕ. Хальхи çамрăксем вара хăйсен вăйне спортра мар, шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсемпе вăй виçме пултарнинче кăтартнă.***

**Пулса иртнĕ преступлени пирки районти шалти ĕçсен пайĕн штаб пуçлăхĕ В.М. Максимов çапла пĕлтерчĕ:**

– Январĕн 2-мĕшĕнче, çĕрлехи вăхăтра, районти шалти ĕçсен пайĕн «Шырав» ушкăнĕ яланхи пекех ĕçречĕ. Исетеркке ялĕ çывăхĕнчи автоçулпа иртсе çӳрекен машинăсене тĕрĕсленĕ. Васкасси енчен килекен çăмăл автомашинăна та ушкăнри çулйĕр хăрушсăрлăх уйрăмĕн инспекторĕ чарма ыйтрĕ. Водитель ăна итлеме шутламарĕ те. Машина Исетерккĕ ялне пăрăнса кĕрсе кайрĕ. Милици сотрудникĕсен ушкăнĕ – вĕсем хыççăн.

Ялта магазин, клуб пĕр вырăнта вырнаçнă. Вĕсен умĕнче машина чарăнчĕ те. Шалта водитель те, пассажир та ӳсĕр пулни тӳрех курăнчĕ. Документсене ыйтсан тĕрĕслеме тесе çамрăксене милици машини çине илсе каймалла пулчĕ. Водителĕн машини те хăйĕн мар иккен – унăн документсем те пулмарĕç. Çак вăхăтра клубран çамрăксен тухса машина патне пычĕç. Хăйсем ӳсĕр. Хăйсен юлташĕсене айăпламалла мар тата вĕсене ирĕке ямалла тесе ыйтаççĕ. Провокацие йышăнман сотрудниксем çине çамрăксем алă çĕклерĕç. Çак хирĕç тăрура çамрăксен ушкăнĕ машинăна та ватса сиен кӳчĕ.

Шалти ĕçсен пайĕнчен сотрудниксен хушма ушкăнне чĕнсе илме тиврĕ. Киревсĕр ĕç тунă çамрăксене милици уйрăмне çитернĕ, темиçешер талăклăх – срокĕ пурин те пĕр мар – арестленĕ.

Çак преступлени тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă. Çамрăксен явап тытмала пуласси куç кĕрет.

# Сакăр кăйкăр сакăр енне саланнă

Мухтавлă салтак амăшĕ 130 çул тултарнă май



***Пурăннă пулсан Татьяна Николаевна Николаева январĕн 25-мĕшĕнче, Татьянăсен кунĕнче, 130 çул тултаратчĕ. Çавна май Муркаш районĕнчи историпе краеведени музейĕнче асăну кунĕ пулса иртрĕ. Унта шкул ачисем, хисеплĕ ветерансем, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертӳçи А.Е.Андреева, Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Л.Г.Ковалева, ветерансен районти канашĕн председателĕ М.В. Виноградова пулчĕç. Чи малтанах пухăннисене музей директорĕ А.Ю. Алешкина паттăрсен çемйипе тĕплĕн паллаштарчĕ, кунтах Хусанти киностудире ӳкернĕ фильма курма май килчĕ. Куççульсĕр вара аса илĕве пăхма майĕ те пулмарĕ.***

– Паттăрсен çемйи паянхи çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх вырăнĕнче пулмалла. Çамрăксен чи малтан çынлăха, ответлăха туйма пĕлмелле. Шел пулин те салтак ретне тăрассинчен шикленекенсем çук мар. Апла пулсан акă камсенчен тĕслĕх илмелле. Шкулта тарăн пĕлӳ пухмалла, хастар та хăюллă пулмалла, – терĕ Алевтина Евстафьевна ачасене камран тĕслĕх илмелине палăртса.

Чуманкасси ял тăрăхĕнчен Тăван çĕр-шыва нимĕç фашисчĕсенчен хӳтĕлеме 450 çын тухса кайнă. Хăшпĕр çемьесенчен висшерĕн-пилĕкшерĕн алла хĕç-пăшал тытнă. Акă вара Исетеркĕ ялĕнчи пĕр çемьерен сакăр кăйкăр сакăр еннелле саланнă. Епле тӳснĕ-ши амăшĕ чĕпписене ăшă йăваран вăрăм çула ăсатнă май?

Исетеркĕ ялĕнче çуралса ӳснĕ Татьяна Николаевна Николаевăна Алексей Илларионович Алексеев сакăр ывăл пăхса ӳстернĕ, вĕсене çĕр-шывшăн усăллă çынсем пулма воспитани панă. Сакăрăшĕ те вĕсем Аслă Отечественнăй вăрçа хутшăннă. Тăваттăшĕ вăрçă хирĕнче мирлĕ пурнăçа хӳтĕлесе пуçĕсене хунă, тăваттăшĕ яла таврăннă. Иван юнлă вăрçăн пĕрремĕш кунĕнчех паттăрлăх кăтартса вилнĕ. Вăл «Ядро» колхозри комсомол организацийĕн секретарĕ пулнă. Çарта та Иван пултарулăхпа палăрнă, Житомирта авиацин кĕçĕн специалисчĕсен шкулĕнче вĕренсе тухнă хыççăн чи лайăх моторист шутланнă.

Григорий вăрçăччен Иваново облаçĕнче милици ĕçне пулнă. Тăван шăллĕ Иван вилнине пĕлсен вăл та хăй ирĕкĕпе фронта тухса кайнă. Днепр юхан шывĕ урлă ăнăçлă каçнăшăн, унăн хĕвеланăç çыранĕнчи плацдарма çирĕплетнĕшĕн тата çавăн чухне хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Григорий артиллериста вилнĕ хыççăн Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă.

Татьяна Николаевнăн тепĕр ывăлĕ, Егор, çара кайиччен колхозра хастар ĕçленĕ, юлташĕсем ăна комсомол организацийĕн секретарĕ пулма суйланă. Вăл 1938 çултанпа Совет çарĕнче пулнă, шурă финсемпе çапăçнă. Аслă Отечественнăй вăрçăра Александр Матросов пек паттăрлăх кăтартнă. 1943 çулхи декабрьте Житомир çывăхĕнчи çапăçура тăшман дзотне хăйĕн ӳчĕпе хупланă.

Чи кĕçĕнни, Павел, 1942 çулхи декабрьте çара кайнă. 1944 çулхи март уйăхĕнче ăна парти членĕн кандидатне йышăннă. Днестршăн çапăçнă. Шыв урлă каçнă... Çавăнтанпа хыпарсăр çухалнă.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**
**(Вĕçĕ çитес номерте).**

Спорт хыпарĕсем

# Кĕрешӳçĕсем ăнăçлă ăмăртнă

Иртнĕ шăмат кун, январĕн 22-мĕшĕнче, районти вĕрентӳ пайĕн спорт шкулĕнче вĕренекенсем Шупашкар районĕнчи Абашево ялне çитсе килчĕç. Спорт шкулĕн Чуманкасси уйрăмĕнче В. Данилов тренер патĕнче ирĕклĕ майпа кĕрешсе ăсталăха туптакансем республика ăмăртăвне хутшăнчĕç.

Чуманкассинчи вăтам шкулта вĕренекен Сергей Афанасьев хăйĕн виçе категорийĕнче çĕнтерӳçĕ пулма хал çитернĕ. Унăн йĕкĕреш пиччĕшĕ Павел пиллĕкмĕш вырăн çĕнсе илнĕ. Евгений Борисов çиччĕмĕш пулнă.

Чăваш Республикин физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн В. Смородиновăн парнисене çĕнсе илес тесе чылай çамрăк спортсмен вăй виçнĕ унта. Асăнса хăвармалла, пирĕн паллă ентеш В. Смородинов Анаткас Апаш ялĕнче çуралса ӳснĕ.

**Хамăр инф.**

# Косачев парнисемшĕн

Январĕн 22-23–мĕшĕсенче Шупашкар хулинче Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕн К. Косачевăн парнисене çĕнсе илессишĕн йĕлтĕрçĕсем ăмăртрĕç. Сивĕ çанталăка пăхмасăрах пĕрремĕш хут иртекен ăмăртăва районти В. Егорова ячĕллĕ спорт шкулĕн 24 воспитанникĕ хутшăнчĕ. Вĕсене И. Смирнов, А. Савельев тата В. Кузьмин тренерсем ертсе пыраççĕ.

С. Абрамова йĕлтĕрçĕ ирĕклĕ майпа тупăшса 3 çухрăмлă тата классика мелĕпе 5 çухрăмлă дистанцисенче çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ. Арçынсен хушшинче çак мелсемпех 5 тата 10 çухрăмлă дистанцисенче Д. Ишуткина çитеккени пулман. Н. Ксенофонтова кĕçĕн çулхи хĕр ачасем хушшинче 3 çухрăмлă дистанцире иккĕмĕш вырăна тухма пултарнă.

А. Харьковпа С. Ивановăна та лайăхпа палăртса хăвармалла. Вĕсем икĕ кунхи стартсенче кăшт çеç призлă вырăна тухайман: 4–5-мĕш вырăнсенче пулнă.

**А. ПЕТРОВ,**
**В. Егорова ячĕллĕ спорт шкулĕн завучĕ.**

Çак ăмăртуранах районти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн воспитанникĕсем те лайăх кăтартусемпе таврăнчĕç.

Аслă хĕрсен ушкăнĕнче ăмăртнă А. Костина йĕлтĕрçĕ (тренерĕ Э. Гордеев) ирĕклĕ майпа чупса 1-мĕш вырăна, классика мелĕпе чупса 3-вырăна тухнă. Кĕçĕннисен хушшинче С. Соколова (Ярапайкасси уйрăмĕ) ирĕклĕ майпа чупса 2-мĕш вырăн çĕнсе илнĕ. Ку ӳсĕмри А. Ксенофонтова (тренерĕ В. Моисеев) классика мелĕпе иккĕмĕш пулнă.

Аслă яшсен ушкăнĕнче ăмăртнă А. Бычков ирĕклĕ майпа чупса финала виççĕмĕш çитнĕ.

Юниор арçынсем хушшинче классика мелĕпе ăмăртнă А. Моисеев та (вăл çак спорт шкулĕн воспитанникĕ пулнă) кĕмĕл медале тивĕçнĕ.

**Т. ЕРМОЛАЕВА,**
**районти вĕрентӳ пайĕн ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн завучĕ.**

# Лысковăра палăрчĕç

«Раççей Президенчĕ Д. Медведев Патшалăх Думине тата Чăваш Республикин Президенчĕ М. Игнатьев Патшалăх Канашне янă Çырăвĕсенче пирĕн пуласлăх ачасенче пулнине, çамрăксене ытларах шанмаллине паянхи çĕнĕлĕхсемпе çыхăнтарса уçса пачĕç. Ку çырусем паян пирĕн ĕç йĕркелĕвĕсем пулса тăраççĕ. Çавăнпа патшалăх ертӳçисен сăмахне тата вĕсен шанăçне эпир ĕçпе çирĕплетме тăрăшатпăр», – терĕç Чул хула облаçĕнчи Лысково хулинче боксерсен хушшинче иртнĕ Пĕтĕм Раççейри турниртан таврăннă С. Черкашинпа О. Сютрюков тренерсем. Кунпа пĕрлех вĕсем хăйсен командин черетлĕ ӳсĕмĕсемпе паллаштарчĕç.

Асăннă турнира республикăран 6 команда хутшăнма тивĕç пулнă пулсан, вĕсен ретĕнче Муркашсем те пулни пирĕн енри бокс шкулĕ малтурттăмлă аталаннине çирĕплетет.

Командăри 6 боксертан 4-шĕ хăйсен виçе категорийĕсенче пĕрремĕш вырăнсене тухнă. Вĕсем: Чуманкассинчи вăтам шкулта вĕренекен А. Корчагин (50 кг), Калайкассинчи вăтам шкулти Д. Грачевпа (32 кг) Р. Николаев (34 кг), Муркашри вăтам шкулта вĕренекен И. Налимов (27 кг). Хăйĕн виçе категорийĕнче Калайкассинчи вăтам шкулта вĕренекен Г. Балканов (32 кг) 2-мĕш вырăн йышăннă.

Черетлĕ çитĕнӳсемпе саламлатпăр çамрăксене.

**А. БЕЛОВ.**

Юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн

# Тав тăватпăр

Пирĕн çывăх çыннăмăра, мăшăра, аннене, асаннене, кукамая, ват кукамая, Исетерккĕ ялĕнче пурăннă Валентина Никандровна Илларионовăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕнпе пĕрле çак пысăк хуйхăна пайланăшăн тăвансене, ял-йыша, пускилсене, Чуманкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективне, Сосновкăри тĕп шкул коллективне тав сăмахĕ калатпăр.

**Илларионовсен çемйи.**


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**ФИЗКУЛЬТУРНО-СПОРТИВНЫЙ КОМПЛЕКС «СЫВЛĂХ» С. МОРГАУШИ ПРЕДЛАГАЕТ ВАШИМ УСЛУГАМ:**
**- Спортивный зал – для проведения спортивно-массовых мероприятий.**
**- Атлетический зал – для проведения занятий по пауэрлифтингу, тяжелой атлетике, фитнесу.**
**- Бассейн на три дорожки – 25 метров.**
**- Зал аэробики и фитнеса.**
**- Настольный теннис и бильярд.**
**- Стандартную хоккейную площадку.**
**- Освещаемый в вечернее время каток (в зимний период).**
**- Комплексную спортивную площадку (в летний период).**
**- Прокат коньков и лыж.**
**- Катание на катамаранах на естественном пруду вокруг великолепного фонтана.**
**- Зал для занятий вольной и классической борьбой, восточными единоборствами.**
**- Зал для занятий боксом, оборудованный профессиональным рингом.**
**- Сауна (финская).**
**ПРИГЛАШАЕМ К СОТРУДНИЧЕСТВУ ОРГАНИЗАЦИИ, ПРЕДПРИЯТИЯ, УЧРЕЖДЕНИЯ РАЗЛИЧНЫХ ФОРМ СОБСТВЕННОСТИ И ЧАСТНЫХ ЛИЦ**
**ДЕЙСТВУЕТ СИСТЕМА ГИБКИХ СКИДОК НА ОКАЗЫВАЕМЫЕ УСЛУГИ:**
**- Пенсионерам.**
**- Ветеранам локальных войн и конфликтов.**
**- Малообеспеченным семьям.**
**- Многодетным семьям.**
**- Инвалидам (по рекомендации врача).**
**СУЩЕСТВУЮТ РАЗЛИЧНЫЕ ВИДЫ АБОНЕМЕНТОВ НА ОКАЗЫВАЕМЫЕ УСЛУГИ:**
**- Разовые.**
**- На один месяц 12 посещений для взрослых и детей.**
**- На один месяц 8 посещений для взрослых и детей.**
**- На один месяц 4 посещения для взрослых и детей.**
**- Комплексные абонементы на посещение 2-х видов занятий.**
**- Комплексные абонементы на посещение 3-х видов занятий.**
**- Годовые абонементы.**
**- Корпоративные абонементы.**
**К вашим услугам комфортные холлы комплекса для проведения корпоративных мероприятий.**
**Мы всегда рады вам! В здоровом теле – здоровый дух!**
**Телефоны для справок: 8(83541)62-2-85, 62-3-58, 62-3-75.**

* * *




**СХПК «Герой» Моргаушского района ЧР приглашает на работу главного зоотехника. Заработная плата достойная.**
**Обращаться по тел.: 67-5-79, 8-927-864-31-33.** 3-3.

* * *

**Ĕне, вăкăр, пăру туянатăп.**
**Тел.: 60-7-10, 8-905-343-60-63.** 6-8.

* * *

**Закупаем бычков, телок, коров, свиней (живым весом).**
**Тел.: 8-905-343-46-23, 60-7-05.** 4-5.

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84.** 4-10.

* * *

**Мартра иккĕмĕш пăруламалли хĕрлĕ ĕне сутатăп. Тел.: 8-905-199-78-19.**

* * *


В объявлении собственников земельных долей, о выделении земельного участка в счет земельной доли, о проведении собрания по согласованию местоположения границ, опубликованного в районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 22 января 2011 года в № 4 (7858), страница 4, в 3 колонке, в 8 абзаце допущена опечатка, вместо «д. Кюрегаси» следует читать «д. Сесмеры».

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:020303:167, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:020303, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5747 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

**Продаем доски хвойные 25х150мм, 50х150мм, 50х200мм; брус любого сечения. Цена договорная. Доставка по району бесплатно. Тел.: 8-903-346-40-58.** 8-10.

Муркашри тĕп больница коллективĕпе профсоюз комитечĕ кунта нумай çул хушши акушеркăра ĕçленĕ ĕç ветеранĕ

**Татьяна Павловна**
**ПАВЛОВА**

вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе пĕрле таранăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**
АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Белов А.П.
Пичете панă 25.01.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4275.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.